Шупашкар
Çĕрпӳ
Кӳкеç
Ишлей
www.tavanen.ru
# Тăван Ен
16+
Шупашкар хутлăхĕн хыпарçи
№ 24 ● (11274-11275) ● ÇĔРТМЕ УЙĂХĔН 20-МĔШĔ ● 2024 ● КĔÇНЕРНИКУНСЕРЕН ТУХАТЬ
Хакĕ ирĕклĕ
Хаçат 1932-мĕш çулхи июлĕн 27-мĕшĕнчен тухса тăрать




● ЯТСЕМ

Пирĕн республикăра пурăнакан Александр Тихонов полковник «Паттăрсен вăхăчĕ» вĕренӳ программине итлекенсенчен пĕри пулса тăнă. Унта хутшăнакансем Солнечногорск хулинче Раççей Президенчĕпе тĕл пулнă.

Тихоновсем – Александр тата унăн икĕ тăван пиччĕшĕ ятарлă çар операцине хутшăнаççĕ. Вĕсенчен пĕри патшалăх Пуçлăхĕпе телефонпа калаçма та ĕлкĕрнĕ. Хальхинче вара Владимир Путинпа тепĕр пиччĕшĕ калаçнă.

– Президент академийĕ патшалăх управленийĕн ĕçĕ-хĕлне тĕплĕнрех тата уççăнрах ăнланма май парать. Эпĕ те, манăн ытти тус-юлташ пекех, занятие çӳллĕ шайра ирттерекен йĕркелӳçĕсене тав тăватăп. Вĕсем пирĕн шухăш-кăмăла шута илеççĕ, – тесе каласа панă пирĕн ентеш Владимир Путина. «Паттăрсен вăхăчĕ» программăпа килĕшӳллĕн вĕренӳ малалла тăсăлать.

Хаклă вулаканăмăрсем!

**«Тăван Ен» хаçата 2024 çулăн утă уйăхĕнчен илсе тăма йӳнĕрех хакпа çырăнма паян кăна пулать.**

● Раççей почтин уйрăмĕсенчи абонент ешчĕкĕнчен илсе тăма çур çуллăх хак – **520 тенкĕ те 56 пус.**

● Почтальон урлă – **548 тенкĕ те 82 пус.**

● Редакцире, Ишлей райповĕн лавккисенче – **420 тенкĕ.**

*Акци йĕрки tavanen.ru сайтра*




**Хаçат çырăн та 10 парнерен пĕрне выляса ил!**

**Ыйтса пĕлмелли телефон 883540(21259)**

**Килтен тухмасăр QR-кодпа – меллерĕх**




● УЯВ



**Çĕртме уйăхĕ савăк та асра юлакан уявсемпе пуян пулчĕ. Пĕтĕм чăвашсен Акатуй уявĕ иртнĕ шăматкун Мускавра 150 пине яхăн хăнана пĕр лапама пуçтарчĕ. Çитес канмалли кунсенчех Республика кунне халалланă мероприятисем пуçланаççĕ. Акатуй Шупашкарта ун чухне те иртĕ, анчах та ВДНХра пĕтĕм чăваш халăхне хисеплесе йĕркеленĕ уяв яланлăхах историе кĕрсе юласси пирки никам та тавлашаймĕ. Сумлă уява паллă тума халăх хуçалăх çитĕнĕвĕсен куравĕнче пирĕн республика валли сцена уйăрнă. Мероприятие йĕркелесе пынă, хутшăннă пин ытла çынна – артистсене, спортсменсене, волонтерсене – Чăваш Ен Пуçлăхĕ хăйĕн телеграм-каналĕнче тав турĕ.**

# Мускаври Акатуй чăвашсене пĕрлештерчĕ

«Халăх хуçалăхĕн çитĕнĕвĕсен куравĕ Акатуйра чăвашла юрларĕ. Çакă хамăр тăван чĕлхене упраса хăварма тата аталантарма пĕлнине кăтартать. Пур çĕрте те чăваш чĕлхи янăрарĕ. Темиçе пин çын чăвашла чунтан тата юратса юрланине курсан эпĕ питех те савăнтăм. Чăваш халăхĕпе мăнаçланатăп. Кăмăл-туйăмсем çĕкленӳллĕ уяв хыççăн та. Апла пулсан Тăван çĕршыва çирĕплетессипе çыхăннă Раççей Президенчĕн тĕллевĕ пурнăçланать. Уяв çакăнта пысăк тӳпе хыврĕ те», – тесе çырнă Олег Николаев.





«Тăрăн ен» халăх фольклор ушкăнĕ

← Нумайрах сăн ӳкерчĕк – пирĕн телеграм-каналта

«Кĕрешӳ» наци кĕрешĕвĕн спорт тĕсĕсен йышĕнче çирĕппĕн тепĕр утăм турĕ. Кăçал ăмăртусем иртнипе пĕрлех видеори тавлашуллă самантсене VAR-курав мелĕпе пăхма та май пулнă.

➡ 4